25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 СЕНТЯБРĔ 30 ЮНКУН 228 (6163) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

# Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

## Натуроплатăна вăхăтра парса татмалла

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1942 çулта тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен йышăннă постановленире колхозсенче государствăна обязательствăсем тăрăх тырă тата çавăн пекех МТС ĕçленĕшĕн тивекен натуроплатăна татас ĕçе уборкăн малтанхи кунĕсенчех организованно пуçлама кирлине кăтартса панă. Партипе правительствăн постановленине тĕплĕн пурнăçа кĕртсе пырса, пирĕн республикăри нумай колхозсем государствăна тырăпа ялхуçалăхĕн ытти продукчĕсене парас ĕçе организованно туса пыраççĕ. Çавăн пекех МТС машинисем ĕçленĕшĕн натуроплата шучĕпе тӳлемелли тырра та хатĕрлев пункчĕсене вăхăтра леçсе параççĕ.

Натуроплата шучĕпе тухакан тырă, пахча-çимĕç тата ялхуçалăхĕн ытти продукчĕсем йăлтах çĕршывăн интересĕсене сыхланă çĕре, Хĕрлĕ Çара çĕнтерӳ тума пулăшнă çĕре каять.

Машинно-тракторнăй станци колхозсемпе тăвакан ĕç договорĕнче МТС-ăн машинисем ĕçленĕшĕн тухакан тырра колхозсем государствăна обязательнăй йĕркепе памалли тырăпа пĕр вăхăтрах хатĕрлев пункчĕсене леçме тивĕçлине уйрăмах паллă тунă. Çавăнпа государствăна тырă парас тĕлĕшпе малта пыракан колхозсен ретне обязательство тăрăх çеç мар, натуроплата шучĕпе тивекен ялхуçалăх продукчĕсене те парса татнă колхоз çеç тăма пултарать.

Натуроплата шучĕпе тухакан тырра государствăна леçсе парас ĕçе ниепле те кая хăвармалла мар. МТС-ăн хăйĕн те тракторпа тумалли çулталăк планĕсене ăнăçлăн пурнăçланипе тата горючие типтерлĕн тыткаласа перекетленипе çеç лăпланса лармалла мар, хăй ĕçлекен колхозсенче натуроплата шучĕпе тухакан тырра пĕтĕмĕшпех государствăна леçсе парас ĕçе лайăх организацилеме тăрăшмалла. Натуроплата тыррине вăхăтра паманни, çак ĕçе пурнăçа кĕртмесĕр хăварма пăхни государствăна, çавăн пекех Хĕрлĕ Çара та пысăк сиен кӳни пулать.

Калас пулать, пур колхозсен руководителĕсем те, çĕрĕç органĕсемпе МТС-сенче ĕçлекен пур работниксем те çакна тивĕçлипех ăнланса илмен-ха. Тĕслĕхрен, Улатăр районĕнчи колхозсем государство умĕнчи обязательствăсене сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне 81,2 процент тултарнă, çав вăхăтрах натуроплата планне пурĕ те 11,8 процент çеç пурнăçа кĕртнĕ. Çавăн пекех Кувакино районĕ те натуроплатăна парса татас ĕçре питех те юлса пырать. Ку районсенчи çĕрĕç пайĕсем колхозсемпе МТС-сем хушшинчи ĕçсене хутшăнасшăн мар, колхозсем натуроплатăна епле тӳлесе пынипе вĕсем интересленмеççĕ, государствăн интересĕсене пырса тивекен çак ответлă ĕçе вĕсем хăй тĕллĕн пулса пырасси çине шаннă. Колхозсем натуроплатăна вăхăтра парса татас ĕçе организацилес тĕлĕшпе Чкаловски, Шăмăршă районĕсем те чăтма çук кая юлса пыраççĕ.

Натуроплата тыррине государствăна вăхăтра парса татас ĕçре юлса пыракан МТС руководителĕсем яланах «вĕсенчен килмен» сăлтавсемпе витĕнме пăхаççĕ. Кам организацилеме тивĕçлĕ ха ку ĕçе. МТС руководителĕсем хăйсем организацилемесен?

Натуроплатăна вăхăтра парса татасси чылай енчен МТС-ăн машинисем ĕçлекен колхозсенче уборка ĕçĕсене большевикла организацилесе ертсе пынинчен килет. Ку ĕçе, районри ответлă çынсемпе пĕрлех, МТ Станци руководителĕсенчен пуçласа кашни трактористпа комбайнер патне çитиччен большевикла тимлĕхпе туса пыма тивĕçлĕ. Колхозниксемпе колхозницăсен ĕçне лайăх организацилесе государство умĕнчи обязательствăсене, çав шутрах натуроплатăна та, срокчен парса татассишĕн кĕрешмелле.

Çавăн пек ĕçлессĕ те государство умĕнчи обязательствăсене срокчен парса татассишĕн большевикла кĕрешекен колхозсем, МТС-сем. Вăрнар районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ В. Кузьмин юлташ) авăн çапас ĕçе кунĕн-çĕрĕн пĕр чарăнмасăр туса пырать. Транспорт бригади кăнтăрла та çĕрле те хатĕрлев пунктне тырă турттарать. Районри «Гигант», «Самолет» колхозсенче те государствăна тырă парас ĕçе япăх мар организациленĕ.

Партипе правительство машинно-тракторнăй станцисене тытса тăма çĕршер пин тонна горючи парать, колхозсене ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн туса ирттерме пур енĕпе те пулăшать. 1942 çулта çеç пирĕн республикăри машинно-тракторнăй станцисене государство 8 пин тоннăна яхăн горючи панă. Пĕтĕм расходсене витме панă средствăсене шутласан, кăçал çеç пирĕн МТС-сем государствăран 16 миллион тенкĕ илнĕ. МТС машинисем ĕçленине пула пирĕн колхозсем ĕçе лайăхрах тума, тухăçлăрах тырпул туса илме пуçларĕç. Машинăсен паха ĕçĕпе çеç кăçал пирĕн колхозсем пиншер центнер тырă ытларах туса илчĕç. Машинăсем ĕçленĕшĕн тӳлекен натуроплата вăл пирĕн колхозсем машинăсемпе ĕçленине пула туса илнĕ тупăшăн пĕр пĕчĕк пайĕ çеç. Ăна государствăна вăхăтра тавăрса парсан, кашни колхозăн чыслă тивĕçĕ пулса тăрать. Çавăнпа натуроплата тыррине государствăна вăхăтра парса татмалла.

МТС коллективĕн колхозсем натуроплата парăмне мĕнле татса пынине куллен тĕрĕслесе тăмалла, ку тĕлĕшпе колхозсене ĕçе лайăх организацилеме пулăшмалла.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура мала тухса çĕнтерӳ ялавне илме ялхуçалăх ĕçĕсене отлично пурнăçланă, государство умĕнчи парăма—натуроплатăна пур колхозсем енĕпе те пĕтĕмĕшпех татнă МТС коллективĕ çеç тивĕçлĕ пулать. Çакна МТС руководителĕсен, кашни трактористăн, комбайнерăн çирĕп шута илмелле.

Хăшпĕр МТС-сем иртнĕ çулти йăнăшсене кăçал та тăваççĕ. Машинăсем ĕçленине çирĕп шута илсе, кашни колхоза ĕçшĕн тӳлемелли натуроплата виçине вăхăтра кăтартса пани çук. Тĕслĕхрен, Ишлей МТС-ĕ сентябрĕн 22-мĕшĕ тĕлне колхозсене 161 гектар ытла çĕртме сухине сӳреленĕшĕн, 4,9 гектар кĕрхи çĕртме тунăшăн тата 128 гектар кĕрхи çĕртмене культивациленĕшĕн счетсем паман. Вăрмар МТС-ĕ сентябрĕн 19-мĕшĕ тĕлне колхозсене 845 гектар çĕртме тунăшăн, 1337 гектар çĕртме сухине сӳреленĕшĕн счетсем çырса паман. Çак йĕркесĕрлĕхе халех пĕтермелле. Колхозсене МТС машинисем ĕçленĕшĕн натуроплата илме счетсем çырса парасси МТС директорĕн ответлă ĕçĕ. Ăна вăхăтра çырса паманни колхозсене натуроплатăна вăхăтра тӳлеме чарса тăрать. Руководительсем хăйсен ĕçĕшĕн ответлăха туйса ĕçлеменнине пула, Вăрмар, Красноармейски тата ытти хăшпĕр машинно-тракторнăй станцисем государство умĕнче пысăк парăмра тăраççĕ. Вăрмар МТС-ĕн колхозсенчен парăм 3.805,4 центнер, Красноармейски МТС-ĕн 700,93 центнер тырă илмелле.

МТС работникĕсен, районсенчи çĕрĕç пайĕсенче ĕçлекенсен колхозсене уборкăна вĕçлес ĕçре пысăк пулăшу памалла. Авăн çапас ĕçе лайăх организацилесе, кашни колхозăн государство умĕнчи обязательствăсене, çавăн пекех МТС ĕçленĕшĕн тухакан натуроплатăна хăвăртрах парса татмалла. Çакă вăл фронта ĕçлĕн пулăшни пулать.

## Ăшă тумтирсем пухас ĕçе лайăхрах организацилемелле

ТĂВАЙ. Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçре Чӳкçырми, Тăрмăш, Вырăс Нăрваш тата Тăвай ялсовечĕсем пример кăтартса пыраççĕ. Ку ялсовечĕсенче ĕçхресченĕсем хушшинче агитаци ĕçне лайăх организациленĕ.

Çапла, Чӳкçырми ялсоветне кĕрекен «Хĕрлĕ Сормово» колхозра (комисси председателĕ В. Алексеева юлташ) ăшă тумтирсем çĕнĕрен пухма тытăннăранпа 6 кĕрĕк пиншак, 39 тир, 16 килограмм çăм, 16 мăшăр çăм носки, 8 мăшăр алшиш, пĕр мулаххай, 7 енчĕк, 4 алшăлли т. ыт. те пухса панă. Ялсовет председателĕ И. Смирнов, ферма заведующийĕ Е. Табакова, колхоз председателĕ Н. Мухин, комсомолăн пуçламĕш организацийĕн секретарĕ М. Петрова, ялсовет исполкомĕн секретарĕ В. Матвеева юлташсем пĕрер кĕрĕк пиншак пачĕç. М. Ивановăна 61 çулти Д. Яковлев юлташсем агитаторсем пулса ĕçлекен иккĕмĕш бригадăра кăна 10 тир, 2 мăшăр алшиш, пĕр кĕрĕк пиншак, 4 мăшăр çăм носки, пĕр алшăлли тата 4,8 килограмм çăм пухнă.

Тăрмăш ялсоветĕнчи Ленин ячĕпе тăракан, Мичурин ячĕпе тăракан тата «Мартăн 8-мĕшĕ» колхозсенче тăван çĕршывăн телейĕшĕн геройла çапăçакан Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе кулленех туса пыраççĕ.

Кун пек паха примерсене татах нумай илсе кăтартма пулать. Апла пулин те, ăшă тумтирсем пухас ĕç районра кирлĕ пек пулса пымасть. Тĕмер ялсоветĕнче Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕç юлса пырать. Смидович ячĕпе тăракан колхозра, вăтам шкулта тата больницăра ĕç хăй тĕллĕн пулса пырассине шанса лараççĕ. Вĕсен руководителĕсем ĕçсыннисем хушшинче массăллă ăнлантару ĕçне туса пымаççĕ, хăйсем ыттисене пример кăтартмаççĕ. Çапла, кунта ялсовечĕпе те паянхи куна 17 тир, 2 мăшăр алшиш, 1 мулаххай, пĕр алшăлли тата 4 килограмм çăм кăна пухнă. Кунта ăшă тумтирсем пухас ĕçе актив хутшăнмасть. Колхоз правленийĕн председателĕн заместителĕ А. Котяков, ялсовет депутачĕ А. Соловьева, вăтам шкул директорĕ С. Зверева, учительница Е. Бельская пĕр ăшă япала та паман. Партипе комсомол организацийĕсем тата вĕсен секретарĕсем А. Орловăпа М. Алексеева юлташсем ăшă тумтирсем пухассине тивĕçлипе организацилемен, вĕсем хăйсем ку ĕçре пример кăтартмаççĕ.

Вл. ИЛЬИН.

## Совет Информаци Бюровĕнчен

### Сентябрĕн 28-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Сентябрĕн 28-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче, **Моздок** районĕнче тата **Синявино** районĕнче çапăçнă. Ытти фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Сентябрĕн 27-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 14 танкне тата 26 автомашинине пĕтерсе тăкнă, полевой артиллерин 8 батарейине пусарса лартнă, противникăн пехотине 3 ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинград районĕнче пирĕн войскăсем тăшманăн йышлăрах вăйĕсене хирĕç йывăр çапăçусем туса пынă. Хулан çурçĕр-хĕвеланăç хĕрринче нимĕçсен икĕ пехотнăй дивизи тата 150 танк таран вăйĕсем наступлени пуçласа янă. Хаяррăн çапăçнă хыççăн тăшманăн танкĕсен ушкăнĕ рабочи поселока кĕрсе кайма пултарнă, çапăçусем çав поселокра пыраççĕ. Кун каçиччен пирĕн боецсем нимĕçсен пехотине икĕ полка çити пĕтерсе тăкнă тата противникăн 50 танкне яхăн персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр хĕвеланăçнерехре совет войскисем çаплах активлăн çапăçнă. Иртнĕ талăк хушшинче, туллимар даннăйсем тăрăх, нимĕçсен 8 танкне пĕтерсе тăкнă тата тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене пин çын ытла вĕлернĕ. Противникран 11 пулемет, вăл шутра пысăк калибрлисем виççĕ, 2 оруди, боеприпассем тата тĕрлĕрен çар пурлăхĕсем тытса илнĕ. Н-ски чаçăн участокĕнче гитлеровецсем, хăйсем унччен çухатнă позицисене каялла туртса илме хăтланса, темиçе контратака та туса пăхнă. Пирĕн боецсем çав атакăсене сирсе ярса, нимĕçсен пехотине 3 ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ. Тарлецкий юлташăн подразделенийĕнчи боецсем, противник тăракан вырăна çĕмĕрсе кĕрсе кайса, темиçе дзота пĕтерсе тăкнă тата çĕр гитлеровеца çити вĕлернĕ.

* * *

Ржевран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем, артиллери персе хатĕрленĕ хыççăн, противникăн оборонин рубежĕсене татнă. Икĕ кун хушши çапăçнă хыççăн нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен халăх пурăнакан 25 пункта ирĕке кăларнă. Çав вăхăт хушшинче, туллимар даннăйсем тăрăх, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 2.000 çынна ытла вĕлернĕ, 8 самолет, артиллерин 6 батарейине тата минометсен 5 батарейине, 16 противотанковăй оруди, 26 пулемет тата боеприпассен 3 складне пĕтерсе тăкнă, 75 блиндажпа дзота çĕмĕрнĕ. Трофейăсем тытса илнĕ, тыткăна илнисем пур.

* * *

Моздок районĕнче пĕр участокра противникăн танкĕсемпе пехоти темиçе хутчен хаяр атакăсем тунă. Вăйлă çапăçу хыççăн противник халăх пурăнакан пĕр пункта йышăнса илме пултарнă. Н-ски чаçăн боецĕсем 10 танк тата 200 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Новороссийскран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн чаçсем активлăн çапăçса кăштах малалла куçнă. Кун каçиччен нимĕçсен тата румынсен салтакĕсемпе офицерĕсене 1.200 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: пĕр танк, 50 ручной тата станковăй пулемет, 20 миномет тата 800 винтовка. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Синявино районĕнче пирĕн войскăсем пирĕн оборонăна савăлланса кĕрсе кайнă противникпа çапăçнă. Бураковский юлташ командир пулса тăракан чаçри боецсем атака туса нимĕçсене пĕр питех те кирлĕ высота çинчен хăваласа янă. Нимĕçсен 3 танкне 2 бронемашинине пĕтерсе тăкнă тата гитлеровецсене пĕр ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Нимĕçсен 72-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 266-мĕш полкăн 12-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ ефрейтор Георг Эккерт çапла каласа панă: «Август уйăхĕн вĕçĕнче пирĕн полка çĕнĕрен çынсем хушса пачĕç те Крымран Хĕвеланăç фронтне ячĕç. Кĕске вăхăт хушшинчех вырăссем пире йывăр çухатусем кӳчĕç. 3-мĕш батальон пачах юнсăрланса юлчĕ. 11-мĕш ротăра 17 çын шутланать, 12-мĕш ротăра—15 çын, 10-мĕшĕнче вара унтан та сахалтарах. Хĕçпăшал пĕтĕмпе тенĕ пекех пĕтнĕ. Çапăçура 3-мĕш батальон командирне Оренший капитана вĕлернĕ».

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Белоруссин хулисене çаратаççĕ, унти халăха пĕтереççĕ. Сентябрь уйăхĕн пуçламĕшĕнче гестаповецсем Минск облаçĕнчи Борисов хулинче 150 çынна ытла çул юсама тухманшăн арестлесе тĕрмене хупнă. Арестленĕ çынсем хушшинче выçăпа пĕтсе çитнĕ тата чирленĕ хĕрарăмсем нумай пулнă. Сентябрĕн 19-мĕшĕнче эсэсовецсен банди хулари тĕрмене çĕмĕрсе кĕрсе кайнă та тĕрмере ларакан çынсене темĕн те пĕр усал кăтартса пĕтернĕ. Вĕсене малтан тискер кайăкла асаплантарнă, унтан пурне те персе пăрахнă.

### Сентябрĕн 29-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Сентябрĕн 29-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче, **Моздок** районĕнче тата **Синявино** районĕнче çапăçнă. Ытти фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Сталинград районĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç йывăр çапăçусем туса пынă. Тăшмана совет артиллерисчĕсем пысăк çухатусем тӳстереççĕ. Вĕсем нимĕçсен 8 танкне персе çĕмĕрнĕ, 15 автомашина тата 13 пулемет пĕтерсе тăкнă, артиллерин 3 батарейине тата минометсен 4 батарейине пусарса лартнă, противникăн 200 автомашинăран тăракан колоннине сапаласа янă. Минометсен батарейин командирне—гвардин старши лейтенантне Солодкова, наблюдательнăй пунктра тăнăскере, тăшманăн 6 танкĕ тата автоматчиксен взвочĕ çавăрса илнĕ. Хастарлă командир пирĕннисене хăй çине пеме хушнă. Батарея харăс персе янă, 3 танка тата 30 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Солодков юлташ тĕрĕс-тĕкĕлех тăрса юлнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре Н-ски соединенин малти отрячĕсем кăштах малалла куçнă. Пирĕн боецсем гитлеровецсене пĕр рота ытла пĕтерсе тăкнă тата 7 пулеметпа 2 миномет тытса илнĕ. Валюгинпа Маслов юлташсем ертсе пыракан подразделенисем çĕрле противникăн çирĕплетнĕ районне çĕмĕрсе кĕрсе кайнă та кĕске вăхăт хушши çапăçнă хыççăн темиçе высотапа çырмана йышăнса илнĕ. Нимĕçсен пехотине икĕ ротăна çити пĕтерсе тăкнă. 10 оруди тата 20 пулемет тытса илнĕ, тыткăна илнисем пур.

* * *

Моздок районĕнче пирĕн чаçсем противникăн танкĕсемпе тата мотопехотипе вайлăн çапăçнă. Н-ски соединенин боецĕсем çĕр каçиччен нимĕç автоматчикĕсен танксем пулăшса пынипе тунă виçĕ атакине сирсе янă. 6 танк тата 15 автомашина пĕтерсе тăкнă, противникăн автоматчикĕсене пĕр ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн пĕр участокĕнче Хĕрлĕ Çарăн Н-ски чаçĕ, противника вирлĕн атакăласа, тактика енчен паха пулса тăракан пĕр высотана йышăнса илнĕ. Нимĕçсем хăйсен резервĕсене илсе пырса, çав çухатнă рубежа каялла тавăрма хăтланнă, вĕсем 5 хутчен контратака тунă. Гитлеровецсен пур атакисене те сирсе янă. Противник çав çапăçура 500 салтакпа офицер таран çухатнă. Нимĕçсен 18 танкне çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ, хăй тĕллĕн çӳрекен виçĕ туппине пĕтерсе тăкнă, 5 оруди тытса илнĕ.

* * *

Карелпа финн партизанĕсен отрячĕ чугунçул кĕперне ун тăрăх войскăсем ларса пыракан поезд пынă чухне сирпĕнтерсе янă. Крушени вăхăтĕнче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем нумай пĕтнĕ.

* * *

Нимĕçсен 252-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 7-мĕш полкăн 8-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ ефрейтор Людвиг Барон çапла каласа панă: «Виçĕ кун хушшинчи çапăçусенче пирĕн батальонра 400 çын ытла вилнĕ е аманнă. Вилнисем хушшинче батальон командирĕ Фальхкауэр капитан тата Фогель оберлейтенант пур. Батальонра 12 станковăй пулеметран 4 пулемет çеç тăрса юлнă. Çавăн пек пырса çапнă хыççăн салтаксем ниепле те ăс-тăна кĕрсе çитеймеççĕ-ха».

* * *

Нимĕç ефрейторĕ Людвиг Ланде çумĕнче унăн Тури Силезие пиччĕшĕ патне яма çырнă çырăвне тупнă. Çав çырура çапла каланă: «Пĕрмаях партизансемпе çапăçатпăр. Пире пулеметсемпе тата гранатометсемпе кун каçа темиçе хут та переççĕ. Пире кирек-хăçанах та пуля лекме пултарать. Çĕрле сывăрма май килмест.. Партизансем çулсене йывăçсем купаласа пӳлсе хураççĕ, çав йывăçсене пухса илнĕ чухне пирĕн çине пеме тытăнаççĕ. Эпир халĕ питех те пысăк çухатусем тӳсетпĕр. Час-часах машинăсем çынсемпе пĕрлех сывлăша сирпĕнсе каяççĕ. Пирĕн батальон сайралса юлчĕ».

* * *

Гитлерла ирсĕрсем Сумы облаçĕнчи Ямное ялĕнче 138 киле çунтарса янă. Вĕсем хресченсенчен [illegible]нпур пурлăхпа продовольствие çарат[illegible] илнĕ. Фашистла бандитсем çав ял[illegible] мирлĕ совет граждăнĕсене 120 çынн[illegible] [ы]тла асаплантарса е персе вĕлернĕ.

* * *

Германин Позняньри [чр]езвычайнăй сучĕ нимĕç помещици [illegible] ĕçлеме килĕшмен поляк хĕрне çа[illegible]лермелле тунă. Судăн приговорĕнч[е] [ çап]ла каланă: «Нимĕçсемшĕн ĕçлеме [ки]лĕшмен кашни поляк çавăншăн хăй[illegible] пурнăçĕпе тӳлемелле», тенĕ.

## Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

### Кварталри плана ирттерсе тултарнă

Шупашкарти техно-ткацки фабрика (главнăй инженерĕ Рохлин юлташ) кăçалхи виççĕмĕш кварталăн планне сентябрĕн 27-мĕшĕ тĕлне пурнăçа кĕртрĕ.

Сентябрь уйăхĕнчи плана фабрика коллективĕ çак уйăхăн 29-мĕшĕ тĕлне 101 процент тултарчĕ.

Фабрикăри рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура тата Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртура илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Фабрикăра ĕçлекенсем хушшинче стахановецсен йышĕ ӳссе пырать. Сентябрь уйăхĕнче Андреева, Николаева, Лейферова, Бугачевская, Ябрукова тата ыттисем те нормăсене ирттерсе тултарса ĕçлерĕç.

Халĕ фабрика коллективĕ Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртура хăйсем çине илнĕ обязательствăсене пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлет.

**А. ГЕЛЬМАН,**
**Фабрикăн производствăпа техника пайĕн начальникĕ.**

## Инвалидсен артелĕнче

Инвалидсен Вăрнарти «Трудовик» артелĕн членĕсем социализмлă ăмăртса ĕçленипе 1942 çулти август уйăхĕнчи плана 108 процент пурнăçа кĕртнĕ.

Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, артель членĕсем хăйсем çине çĕнĕ обязательствăсем илнĕ. Вĕсем хăйсен сăмахне пурнăçа кĕртме тăрăшаççĕ.

— Хамăр çине илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртетпĕр,—тет артель правленийĕн председателĕ А. В. Брызгалов юлташ.

Артель членĕсем сентябрь уйăхĕнче те тимлĕн ĕçлеççĕ. Атă çĕлекен 75 çулхи А. С. Луконин нормăна 208 процент таран тултарса ĕçлет. Атă çĕлекенсем А. Буфотин нормăна — 154 процент, Н. Матвеев—185 процент тултарса пыраççĕ. Çĕвĕçĕ Екатерина Горкина нормăна 152 процент, хăма çуракан Иван Николаев—150 процент, катка-пичке тăвакансем И. Антонов—135 процент, И. Корнев — 125 процент, Бочков—105 процент, кашăксем тăвакан Емелин—175 процент таран тултарса ĕçлеççĕ. Артель сентябрь уйăхĕнчи плана çак уйăхăн 26-мĕшĕ тĕлне тултарнă.

Ку артельре халиччен туман япаласем тума тытăннă: кашăксем, йĕлтĕрсем тăваççĕ, кăмрăк çунтараççĕ. Артель пăспа авăракан арман лартса, ăна ĕçлекен тунă.

## Планран ирттерсе пиншер кубометр вутă хатĕрлеççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. (**Хамăр корр.**). Чугунçул транспорчĕ валли çителĕклĕ таран вутă хатĕрлесси пысăк та ответлă задача пулса тăнине районри колхозниксем аван пĕлеççĕ. Çавăнпа ку ĕçе вĕсем пысăк активлăхпа туса пыраççĕ. Район III-мĕш квартал планне ытлашшипех тултарни ăна лайăх çирĕплетсе парать. Уйрăмăнах касса хатĕрлес енĕпе результатсем аван: плана сентябрĕн 18-мĕшĕ тĕлнех 110 процент тултарнă.

Вăрман хатĕрлес ĕç ăнăçлăн пурнăçланса пыни колхозсем çителĕклĕ таран ĕç вăйĕ парса тăнинчен тата ĕçре социализмлă ăмăртăва сарса пынинчен килет. «Труд», «Комбайн», «Молодая сила», «1-ое Мая» колхозсем, вăрмана кирлĕ чухлĕ ĕç вăйĕ янă май, хатĕрлемелли заданисене ик-виçĕ эрне малтан тултарчĕç.

Уйрăм колхозниксемпе бригадăсем ĕçре пысăк çитĕнӳсем турĕç. «Комбайн» колхозран пынă А. Лотра, В. Сафонова колхозницăсем нормăна куллен 110 процент, «1-ое Мая» колхоз членĕсем О. Ашмаринăпа Д. Романова—120 процент, «Красноармеец» колхоз членĕ А. Булыгина—134 процент тултарса ĕçлеççĕ. «Комбинат» колхоз членĕ И. Арланов юлташ кашни кун 5 кубометр, уйрăм кунсенче 7 кубометр вутă турттарать. Юлашки эрнере кăна вăл 31 кубометр ытла вутă турттарнă.

Ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пыракансен йышĕ уйрăмах юлашки вăхăтра хăвăрттăн ӳсрĕ. Малтанхи вăхăтра нормăна та тултарса ĕçлеймен С. Ярмошин, С. Мажуков, С. Швецов, В. Антошин, Д. Орешников юлташсем халĕ куллен 10—25 процент ирттерсе тултараççĕ. Нумай пулмасть мехлесопункт дирекцийĕпе рабочисем вĕсене пусматаварсем парса премилерĕç.

Чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлекенсем, Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, татах та тухăçлăрах ĕçлеме тăрăшаççĕ. Вĕсем çак уйăхра кварталри планран ирттерсе 1.500 кубометр касса хатĕрлеме тата 2.000 кубометра яхăн турттарма обязательство илчĕç.

## Ĕçри çитменлĕхсене халех пĕтермелле

ВĂРНАР. Калинино районĕнчи колхозниксем Вăрнар леспромхозĕн Пинерти мастерскойĕн участокĕнче чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлеççĕ. Вутă турттаракансем ĕçĕн малтанхи кунĕсенчех нормăна 140—150 процент таран тултарса ĕçлеме тытăнчĕç. М. Павлов (Кивкасси), Ф. Горбунов (Кăкшăм), Г. Михайлов (Хурăн Кăкшăм), Е. Иванова (Ермошкино) сентябрь уйăхĕнче кулленхи нормăна яланах 200 процентран кая мар тултарса пычĕç. Çавнашкалах вутă касса хатĕрленĕ çĕрте Айкăш ялсоветĕнчи Ф. Гаврилов ертсе пыракан бригадăри Е. Прокопьевпа Н. Владимирова, Юманай ялсоветĕнчи И. Григорьев ертсе пыракан бригадăри Н. Унтрицов юлташсем, малтанхи кунсенче 1—2 кубометр вутă татнăскерсем, тепĕр 4—5 кунтан лучковăй пăчкăсемпе ĕçлеме вĕренчĕç, кунне 5—6 кубометр вутă татса нормăна 200 процент таран тултаракансен ретне тăчĕç.

Вутă хатĕрлекенсемпе турттаракансем хушшинче звенопа ĕçлессине организациленĕ май, район сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне виççĕмĕш кварталта вутă хатĕрлемелли плана 82 процент, турттармалли плана 95 процент тултарчĕ.

Вăрманта учет ĕçне лайăх туса пыни хăвăртлăхсене ӳстерет. Апла пулин те, учетчик Белов юлташ хăйĕн ĕçне тивĕçлипе туса пымасть. Ĕçĕн пахалăхĕпе пысăкăшне тĕрĕс шута илмест. Бригадăсенчи çитменлĕхсене пĕтерес ĕçре колхозниксене пулăшмасть. Ку çеç те мар. Леспромхоз диекторĕ Сазанов, Пинерти мастерской участокĕн начальникĕ Панкрашев юлташсем ĕç хатĕрĕсене вăхăтра тупса парас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ, вĕсем ĕçĕн свидетелĕсем вырăнĕнче пулса юлма тăрăшаççĕ. Çавăн пиркиех ĕнтĕ ĕçре пысăк чăрмавсем пур.

Рабочисем валли ятарласах столовăй организациленĕ. Анчах та апат-çимĕçсене çителĕклĕ тата лайăх пĕçермеççĕ. Час-часах кунне 10—12 рабочи апатсăр юлаççĕ. Рабочисене ĕç укçи парассине те питĕ начар организациленĕ. Сентябрĕн 12-мĕшĕнче пĕр рабочие укçа илме конторăна чĕннĕ пулнă, анчах та рабочи пĕр минута каярах юлнă пирки, ăна укçа памасăрах кăларса янă. Çапла вара рабочи хăйĕн ĕç вăхăтне сая янă.

С. КОШКИН.

## Тăшман уççăнах йышăнни

ВОЛХОВ ФРОНЧĔ. Фронтăн пирĕн патăрти участокра тыткăна илнĕ нимĕçсем гитлерла çаратуçă-çар вăхăтлăха оккупациленĕ совет районĕсенче тискер ĕçсем туни çинчен уççăнах каласа параççĕ. 28-мĕш горно-егерьски стрелковăй дивизин 83-мĕш полкĕнчи пĕрремĕш ротăран тыткăна лекнĕ ефрейтор Гейнц Олиас çапла каласа панă:

«Вырăссен фронтĕнче эпĕ çулталăк ĕнтĕ çапăçатăп. Эпĕ Смоленскра, Вязьма патĕнче, Николаевскра, Херсонщинăра тата Украинăн ытти районĕсенче, çавăн пекех Крымра та пулнă. Эпĕ мĕн курса-илтни çинчен сăмахпа каласа пама йывăр. Феодосия, Николаев, Херсон, Первомайск хулисене питех те хытă аркатнă. Украинăра чуклай çĕрсене акмаççĕ, мĕншĕн тесен хресченсен лашисемпе вăрлăхсем, инвентарь çук.

Германи çарĕнчи салтаксем мирлĕ халăхран ирсĕррĕн мăшкăллаççĕ тесе вăйăплани тĕрĕс. Эпĕ Молотовăн нотисене вуланă, вĕсене питех те тĕрĕс тесе шутлатăп. Эпир Николаева пырса çитсен пирĕн куç умне чи малтан виселицăсем çинче çакăнса тăракан 12 виле тухса тăчĕ. Вĕсем хушшинче — 3 хĕрарăм. Çынсене массăллăн перетпере пăрахнине эпĕ Симферопольре, Херсонра, Первомайскра, Константиновкăра курнă. Ман шутпа çамрăк хĕрарăмсемпе хĕрсен пурнăçĕ уйрăмах йывăр. Яланах тенĕ пекех нимĕç салтакĕсем вĕсене хăйсемпе пурăнтараççĕ. Херсонпа Феодосия хулисенче эпĕ нимĕçсен комендатурисем салтаксем валли уçнă намăс çурчĕсене курнă. Салтаксене çав çуртсене çӳреме пур енĕпе те хĕтĕртсе пыраççĕ. Пирĕн часть Феодосия хулине пырса çитсенех, офицерсем салтаксене хулара намăс çурчĕ уçăлни çинчен пĕлтерчĕç. Эпĕ ăста çитнĕ, çавăнта пур çĕрте те нимĕç салтакĕсем çине халăх тăшманла пăхать. Утса пынă чухне вара яланах кам та пулин кĕтесрен пырса çапасассине кĕтсе шикленетĕп»

## Колхоз Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртура

ИЕПРЕÇ, сентябрĕн 28-мĕшĕ. (Телефонпа). «Коминтерн» колхоз членĕсем, Октябрьти социализмлă аслă революци 25 çул тултарас уяв умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, хăйсем çине илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçласа пыраççĕ. Колхозра молотилкăпа те, алăпа та авăна ирттен пуçласа тĕттĕм пуличченех пĕр чарăнмасăр çапаççĕ. Молотилкăн сменăра 8 тонна тырă çапса кăлармалла пулсан, колхозниксем ывăнма пĕлмесĕр ĕçленипе, вăл сменăра 10—12-шер тонна çапать. Колхозниксемпе колхозницăсем авăн çапас ĕçе октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне вĕçлеме тăрăшаççĕ.

Колхоз кĕлтесене капана хывнă, çĕрулми кăларса пуçтарнă, кантăр татса пĕтернĕ. Техникăллă культурăсене пухас ĕçре 3 ... бригадăри М. Кузьмина, М. Тим...ева, Иванова, Васильева колхозницăсем ĕç нормине тăтăшах 120—150 процент тултарса пычĕç. Колхоз государство умĕнчи обязательствăсене чыслăн пурнăçласа пырать. Государствăна тырă, çĕрулми пахча-çимĕç срокчен парса татнă. 1942 çулта памалли аш-какай обязательствине тултарса, колхоз 1943 çулшăн та 315 килограмм панă, Хĕрлĕ Çарăн фондне хывма 306 пăт тырă леçнĕ, натуроплатăна октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмĕшпех парса тататççĕ.

Колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне те ăнăçлăн пурнăçласа пырать. Паянхи куна ĕнесем ĕрчетес тĕлĕшпе плана 135 процент, сурăхсем енĕпе 100 процент, сыснасем енĕпе 117 процент пурнăçланă. Колхозăн фермисенче ĕçлекенсем витесене юсаса хĕле хатĕрлеççĕ, вĕсем пуçарулăн ĕçленипе кăçал колхоз 120 тонна силос хывса хăварнă.

Шупашкарти чăлха фабрикинчи рабочисемпе работницăсен пуçарăвне ырласа, колхозниксемпе колхозницăсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли уяв парнисем хатĕрлеме тытăнчĕç. Колхоз Хĕрлĕ Çар боецĕсем патне 3 центнер тулă çăнăхĕ, 2 килограмм çу, 10 хур, 5 чăх, купăста, сухан, махорка тата 10 литр эрех ярса парать. Ку ĕçе колхозниксемпе колхозницăсем те активлăн хутшăнаççĕ. Хĕрлĕ Çар боецĕсем патне яма вĕсем паянхи куна 100 çăмарта, 10 чăх, 3 килограмм махорка пухнă.

**Д. МИХАЙЛОВ.**

### *Кĕрхи çĕртме ĕçĕ юлса пырать*

КУСЛАВККА. Районри колхозсенче кĕрхи çĕртме тăвас ĕç юлса пырать. Сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне пурĕ те 1.240 гектар çеç сухаланă. Ку вăл кĕрхи çĕртме ту... плана район 18,6 процент çеç пурнăçланине кăтартать.

Юлашки кунсенче районри уйрăм колхозсем кĕрхи çĕртме хăвăртлăхне ӳстерсе пычĕç. «Ленинский призыв» (председателĕ Смирнов), «Красный курган» (председателĕ Злобов), Чкалов ячĕпе тăракан колхозсем кĕрхи çĕртме тумалли плана çитес сывăх кунсенче пурнăçа кĕртеççĕ. Ку колхозсенче кĕрхи çĕртме тума уйрăм звеносем организациленĕ, лашасем çителĕклĕ таран уйăрса панă. Звеносем пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ. Вĕсен примерĕпе районри ытти колхозсен те кĕрхи çĕртмене срокра туса хăварассишĕн кĕрешмелле.

Çакна хăшпĕр колхозсен руководителĕсем халĕ те ăнланса илесшĕн мар-ха. Пăрмасри «Новый путь», Каганович ячĕпе тăракан, «Коммунар», «Ударник», «Трактор», Ырашпулăхĕнчи «Новая жизнь» колхозсем кĕрхи çĕртме тума тытăнманпа пĕрех. Каганович ячĕпе тăракан колхозăн (председателĕ Петров) кăçал кĕрхи çĕртме 210 гектар сухаламалла. Колхоз кĕрхи çĕртме сухине тума халĕ те тытăнман. Колхозра уборка ĕçĕсене тĕрĕс организациленменнине пула, кунта çĕртме тунă çĕре халĕ те ĕç вăйĕ çителĕклĕ таран уйăрса памаççĕ. Кĕлтесене капана хывас ĕçре малта пыракан колхозсен опычĕпе усă курмаççĕ. Кĕлтене алăпа йăтса капана хывас ĕçе кунта пачах та йĕркелемен. Кĕрхи çĕртме тума бригадăсемпе звеносем организацилемен, ĕçе ăмăртса туни çук.

Партипе комсомолăн вырăнти организацийĕсем те кĕрхи çĕртме тăвас тĕлĕшпе кирлĕ пек ĕçлени курăнмасть. Халĕ уяр çанталăкпа усă курса, колхозсен ĕç вăйне кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе мобилизацилемелле, туртăм вăйĕн 40 процентне куллен сухă тунă çĕрте ĕçлеттермелле

Ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пырса районри пур колхозсен те кĕрхи çĕртме тăвас плана октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне пурнăçламалла.

**И. ШАРКОВ.**

# Ăшăх сухалаççĕ

СЕНТЕР. Районри колхозсен сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпе 3.500 гектар кĕрхи çĕртме тумалла пулнă, вĕсем паянхи кун тĕлне мĕнпурĕ те 1.690 гектар çеç сухаланă. Районри 101 колхозран 37 колхоз халĕ те кĕрхи çĕртме тума тытăнман. Чылай колхозсенче кĕрхи çĕртмене ăшăх сухалаççĕ, ĕçĕн пахалăхĕ питĕ начар.

Мăн Хураçка ялсоветĕнче 7 колхоз, анчах та вĕсем халĕ те кĕрхи çĕртме тума тухман. Çакнашкалах Çатракасси ялсоветĕнчи 4 колхоз, Сĕнтĕр ялсоветĕнчи 6 колхозран 4 колхоз кĕрхи çĕртме тума тытăнман

Кĕрхи çĕртме пахалăхĕ мĕнле пулмалли çинчен Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ хăйсен постановленийĕнче тĕплĕн кăтартса панă. Анчах та «Броневик» колхозра кĕрхи çĕртмене 5—6 сантиметр тарăнĕш çеç сухалаççĕ. Шомик ялсоветĕнчи «Колос» колхозра кĕрхи çĕртмене 100 гектар ытла тунă, анчах та ĕç пахалăхĕ çав тери начар, çĕре 5—6 сантиметр тарăнĕш çеç сухаланă.

Кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе районри çĕрĕç пайĕ питĕ начар ертсе пырать. Районри партипе совет организацийĕсем кĕрхи çĕртме тăвас ĕç çине çителĕклĕ таран çавăрăнса пăхмаççĕ.

**А. СОЛОВЬЕВ.**

## Колхоз тыррине çаратакансене ответ тыттармалла

Вăрçă вăхăтĕнче социализмлă пурлăха сыхлас ыйту уйрăмăнах пысăк вырăн йышăнса тăракан ыйту пулса тăрать. Колхозăн кашни килограмм тырри, кашни кăт улăмĕ обществăн никам тĕкĕнме пултарайман пурлăхĕ пулса тăрать, унпа тивĕçлипе усă курмалла. Колхозсем государствăна тырă парса татнă хыççăн вĕсен йышлă тырпуллипе уйхирсенче лайăх, тăрăшса ĕçленĕ колхозниксем çеç усă курма тивĕçлĕ.

Колхозăн пуян тата никам тĕкĕнме пултарайман пурлăхĕ патне час-часах вăрăсем, кахалсемпе сăтăрçăсем алă тăсма пăхаççĕ. Колхоз пурлăхне хапсăнакан ирсĕр хура çăхансене çийĕнчех тытмалла, вĕсене çирĕп ответ тыттармалла. Çакă вăл колхозсен паянхи задачи пулса тăрать.

Кашни кĕлтене, тыррăн кашни килограмне шута илсе пыракан колхозсенче, хирсене, итемсене, амбарсене сыхлас ĕçе лайăх организациленĕ колхозсенче, пурлăха шанчăклă çынсен аллине панă колхозсенче пĕр килограмм тырра та вăрламаççĕ те, урăх çĕре те яраймаççĕ.

Анчах та çакна чылай колхозсен председателĕсем ăнланса илмен. Хăшпĕр çĕрте «вăрласан та йăлтах вăрлаймĕç» текен шухăш-кăмăлпа лăпланса ларнă колхоз председателĕсем колхоз пурлăхне сыхласа усрас, ăна тĕплĕн шута илес ĕçсем çине тивĕçлипе çавăрăнса пăхмаççĕ. Çакнашкал колхоз руководителĕсем хăйсен ответлăхне туйса илмеççĕ, тупăша сыхласа усрас ĕçе манса хăвараççĕ, вăрă-хурахсене çаратма услови туса параççĕ. Ун пек руководительсене судпа çирĕп ответ тыттарас пулать.

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Мотор» колхозăн председателĕ уйрăм хирсенче мĕн чухлĕ кĕлте пуррине пĕлмест, тырра сыхлас ĕçе организацилемен. Çакăнпа усă курса, колхоз арманĕнче ĕçлекен мельник Кузнецов колхоз уйĕнчен 700 кĕлте вăрласа çапнă, авăртнă. Кузнецова çакăншăн судпа айăпланă. Анчах тырпула вăрлама услови туса панă çынсене те ответ тыттармалла.

Елчĕк районĕнче те итемсене хураллас ĕçе начар организациленĕ. Çавăн пирки ĕнтĕ спекуляци тума вĕреннĕ единоличниксем колхоз итемĕсем çинчен тырă вăрланă. Прокуратура 11 килограмм тырă вăрланăшăн единоличница Родионовăна судпа айăпланă. Анчах та çав вăхăтрах район прокурорĕ итем çинче хурал тăрас ĕçе организацилемен çынсене ответ тыттармасăр хăварнă. Çакă вăл пачах та тĕрĕс мар.

Чылай районсенчи колхозсенче кĕлтесене уйран кĕртес ĕçе тĕрĕслемен çынсен аллине шанса панă. Вăрмар районĕнчи «Красные Шигали» колхозри Тапинов, Скворцова, Бихлакова колхозниксем комбайнпа вырнă тырра амбара турттарнă чухне 4 центнер тырă вăрласа юлнă. Колхоз тыррине вăрлакансене нумай çуллăха тĕрмене хупса усрамалла тунă.

Асăннă фактсем колхозсенче пурлăха хураллас, ăна тĕрĕс шута илсе пырас ĕçсене тивĕçлипе организацилеменнинчен килнĕ. Тимсĕр руководительсем хăйсен çĕршыв умĕнчи обязанноçĕсене, колхозăн пуянлăхне ӳстерсе пырассине манса каяççĕ. Вырăнти партипе совет организацийĕсем те обществăллă пурлăха сыхласа усрас ĕçе организацилес тĕлĕшпе пачах çителĕксĕр ĕçлеççĕ, ку ĕç çине тивĕçлипе çавăрăнса пăхмаççĕ. Общество пурлăхне вăрлакансене каçару пулмалла мар, вĕсемпе вирлĕн кĕрешмелле. Пурлăха тĕрĕс сыхласа усрас ĕçе тивĕçлипе организацилемелле

**ЧАССР прокурорĕ КОТОВ.**

## Государствăна пахча-çимĕçсем срокчен парса татар

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Колхозсенче, ялхуçалăхĕн ытти ĕçĕсемпе пĕрлех пахча-çимĕçсене пухса кĕртес ĕç те ăнăçлăн пулса пырать. Уйрăм колхозсем, пахча-çимĕçсене кăларнă май, вĕсене çийĕнчех государствăна параççĕ.

Молгачкинăри «Молодая сила» колхозăн план тăрăх кăçал 4.240 килограмм купăста, 838 килограмм хăяр, 541 килограмм кишĕр памалла. Сентябрĕн 19-мĕшĕ тĕлне колхоз çав çимĕçсене пĕтĕмпех парса татрĕ. Кишĕр памалли плана колхоз икĕ хут ытла ирттерсе тултарчĕ. Кунсăр пуçне тата 530 килограмм помидор, 236 килограмм сухан пачĕ.

Государствăна пахча-çимĕçсем парас тĕлĕшпе Турханти «Комбинат», Хутарти Ленин ячĕпе тăракан, Улхаш ялсоветĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем те малта пыраççĕ. Вĕсем государствăна пахча-çимĕç парас плана ирттерсе тултарнă. Сăмахран, «Комбинат» колхоз 24,5 центнер хăяр парас вырăнне 39,9 центнер панă. «Комбайн» колхоз хăяр памалли плана 203 процент тултарнă.

Анчах уйрăм колхозсем государствăна пахча-çимĕç хатĕрлесе парас ĕçе кирлĕ пек туса пымаççĕ-ха. «Новая жизнь», «Полярная звезда», «Красный Октябрь» колхозсем ку таринччен те государствăна пахча-çимĕç пама тытăнман. «Большевик» колхоз хăяр памалли плана 50 процента яхăн кăна тултарнă.

## Çĕрулми кăларас ĕçе хăвăртрах вĕçлер

Республикăри колхозсемпе совхозсем кăçал пысăк тухăçлă çĕрулми ӳстерчĕç. Шупашкарти «Росглаввино» совхозăн уйрăм участокĕсенче çĕрулми гектар пуçне 400 центнер ытла тухать, Карачура участокĕнче «Лорх» сортлă çĕрулми вăтам шутпа кашни гектартан 200 центнер ытла кăларса пуçтарнă. Нумай колхозсенче те çĕрулми кăçал пысăк тухăçлă пулчĕ. Шупашкар районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз «Лорх» ятлă сортлă çĕрулмине гектартан 250 центнер пуçтарса илнĕ.

Академик Лысенко кăтартса панă майпа анлăн усă курса, кăçал чылай колхозсемпе предприятисем хăйсен уйĕсемпе подсобнăй хуçалăхĕсенче çĕрулми тăррисене касса лартса хăварчĕç. Халĕ ĕнтĕ çав участоксенче те çĕрулми лайăх пулнине уççăнах курма пулать. Çĕрулми тăррине касса лартнă участоксенче Шупашкарти ресторансемпе столовăйсен тресчĕ пысăк тухăçлă çĕрулми туса илчĕ. Çĕрулми тăрринчен ӳснĕ кăксенче 700 грамм йывăрăш турткан çĕрулмисем нумай пулнă.

Çĕрулмине тухăçлăн ӳстернĕ хыççăн халĕ ăна кăларса тирпейлесе хурас ĕçе те нумай колхозсем лайăх туса пыраççĕ. Çĕршер колхозсем çĕрулмине кăларса пуçтарас ĕçе вĕçлерĕç те ĕнтĕ. Тăвай, Елчĕк, Чкаловски, Канаш тата ытти хăшпĕр районсенчи колхозсем çак кунсенчех çĕрулмине пĕтĕмĕшпех кăларса пĕтереççĕ. Вĕсем СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ çĕрулмине кăçал кĕрхи сивĕсем çитиччен йăлтах пуçтарса кĕртме хушнине çирĕп пурнăçласа пыраççĕ.

Анчах та çĕрулми тата ытти пахча-çимĕçсене пухса кĕртес ĕç чылай колхозсенче питĕ те вăраха юлса пырать. Çĕрулми кăларас ĕçе вăхăтра организацилеменнипе Кувакино, Красноармейски, Первомайски, Пăрачкав тата ытти хăшпĕр районсенчи колхозсем иртнĕ çулта тунă йăнăша кăçал та тăваççĕ. Çак районсенчи колхозсен çĕрулми кăларас ĕçе халех вăйлатмалла, кăçал пĕр кăк çĕрулми те уя юлмалла мар, сивĕпе шăнса пăсăлмалла мар. Кашни кăк çĕрулмине вăхăтра тирпейлĕн пуçтарса илмелле. Çавăнпа та халĕ çĕрулми пухса илес ĕçе васкатмалла, кирек мĕнле çанталăк пулсан та, çĕрулмине октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмĕшпех пуçтарса кĕртмелле.

Октябрьти социализмлă аслă революци 25 çул тултарнă уява республикăри колхозсем ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Уяв умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, вĕсем ялхуçалăхĕнче татах та пысăкрах тимлĕхпе ĕçлеме çĕнĕ обязательствăсем илеççĕ. Вăл шутра пахча-çимĕçсене, çĕрулмине хăвăрт пухса илесси те паллă вырăн йышăнса тăмалла.

Районсенчи çĕрĕç органĕсен, МТС политотделĕсенче ĕçлекен работниксемпе колхоз руководителĕсен колхозниксемпе колхозницăсене çĕрулмине хăвăрт пухса кĕртес ĕçе мобилизацилемелле. Ĕç майĕсене лайăхлатса пынипе пĕрлех ĕçе пысăк пахалăхпа тăвассишĕн те кĕрешмелле.

Кĕрхи çумăрлă кунсем пуçланчĕç. Çĕрулмине типĕтес ĕç çине халĕ уйрăмах тимлĕн пăхмалла. Çĕрулмине кăларсан çийĕнчех сортласа пымалла, типĕтнĕ хыççăн хĕллехи хранилищĕсене лайăх тирпейлесе хумалла.

**Р. ОСАНОВ.**
**Чăваш АССР Наркомземĕн агрономĕ.**

# Ют çĕршывсенче

## Иден тухса калани

ЛОНДОН, сентябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Англин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден сентябрĕн 26-мĕшĕнче Лимингтонра сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: Россие нумай пулмасть ăнăçлăн çитнĕ судносем Англипе США-ран пыракан хĕçпăшалсене илсе çитернĕ. Унта нумай самолетсем, танксем, орудисем, боеприпассем тата тĕрлĕ хатĕрсем пулнă. Вĕсене илсе çитерни питĕ пысăк ĕç пулса тăрать. «Çакна савăнса палăртма пулать,—тенĕ Иден,—çав грузсене хамăрăн вырăс союзникĕ патне чи хăрушă вăхăтра илсе çитернĕ. Сталинградри пыракан çапăçу çероба çапăçу пулса тăрать. Вырăс çарĕсем хăйсен тунине нимĕнле мухтаса калани те çителĕклĕ таран палăртма пултараймасть».

Англин Германие хирĕç тăвакан сывлăшри операцийĕсем çинчен каласа, Иден çакна палăртнă: çав операцисем вăйлăланнăçемĕн вăйлăланса пыраççĕ. 1940 çулхи июньпе июль уйăхĕсенче Англи авиацийĕ Германи çине 3.500 тонна бомба пăрахнă. 1941 çулта çав уйăхсенчех 8.500 тонна пăрахнă, 1942 çулхи июньпе июль уйăхĕсенче 13.000 тонна бомба пăрахнă. Çак уйăхăн малтанхи 14 кунĕ хушшинче 9 хут вĕçсе кайса 5.000 тонна пăрахнă, урăхла каласан—кашни хутĕнче 500 тонна ытла бомба пăрахнă. Нацистсем пирĕн çине икĕ хутчен çеç çĕрле 400-шер тонна ытларах бомба пăрахнă: икĕ хутĕнче те вĕсем аслă района—Лондона тапăннă чухне çавăн чухлĕ пăрахнă. Лондон вăл Кельн территорийĕнчен 5 хут аслăрах. Кельн çине эпир 90 минута хушшинче 1000 тонна бомба пăрахнă.

Атлантикăпа пыракан çапăçупа çыхăнса тăракан объектсене—Бремена, Вильгельмсхафена тата Дюссельдорфа—эпир яланах хытă асăрхаса тăратпăр. «Пирĕн çав пунктсене вăхăтран вăхăта пыра-пыра тапăнмалла пулатьха, пырса тапăннисем вăйлăланнăçемĕн вăйлăланса пырĕç. Сывлăшран бомбăсем пăрахнин ăнăçăвĕсем вĕсем çав хăватлăн та тăтăш пыра-пыра тапăннинче ĕнтĕ. Эпир нимĕçе хăратас тесе тапăнатпăр тени йăнăш пулнă пулĕччĕ. Пирĕн тĕллев ăна хăратасси мар, пирĕн тĕллев ăна çыхлантарса лартасси, ăна малашне сиен кӳме пултараймалла мар тăвасси пулса тăрать».

«Сывлăшра наступлени туни хăйне хăй тĕрĕсе кăларчĕ ĕнтĕ,—тенĕ малалла Иден.—Эпĕ сире çав наступление хальхи шайпа туса пымаллине тата малашне ăна эрнерен эрнене, уйăхран уйăха хăватлăлантарса пымаллине эпир лайăх ăнланса илетпĕр тесе шантарса калама пултаратăп. Çакна эпир тăватпăрах».

Англин тулашри политики ĕлĕкрех мĕнле пулни çинчен каласа, Иден çакна каланă:

«Каялла, икĕ вăрçă хушшинчи тапхăр çине çаврăнса пăхса, эпир унта йĕркесĕр пулнине куратпăр, мĕншĕн тесен пирĕн шанчăк çителĕклĕ пулман. Хамăра хамăр шанни тата хамăр шанса тăни çителĕклĕ пулман. Çак кăна вăл тулашри политикăра пирĕн хамăр курăнса тăнă. Эпир вăйлă та пĕр-пĕрне пыракан вăл тулашри политикăна тытса пыма шухăшламан, çĕнтерӳрен илнĕ тупăшпа лăпланса лармалла тăрăшманни тата пĕтĕмĕшпех пĕтерсе лартнă».

Иден çапла каланă: ман шухăшпа, çак вăрçă Англие пĕр енчен усă кӳчĕ. Вăл пĕр тĕллевшĕн тăрăшассине тата хамăра хамăр шанассине çĕнĕрен ура çине тăратрĕ. Эпир çакна ăнланса илтĕмĕр: мире çĕнтерсе илес пулать, мир тумашкăн ĕçлес пулать, уншăн тӳлес пулать; идейăсем чикĕсене шута илмеççĕ, пĕр çĕршыври ĕçсĕрлĕх е вăрçă ытти çĕршывсене те ĕçсĕрлĕх е вăрçă кӳреççĕ. Эпир çакна ăнланса илтĕмĕр: мир тума çирĕплĕхпе жертвăсем тӳсни кирлĕ, пуринчен ытла—вăрçă вăрçнă чухлех сыхăлăхлă пулни кирлĕ.

Иден тĕнĕл держависем пусмăрти халăхсем тĕлĕшпе тунă преступленисене каласа тухса çапла каланă: «Çав преступленисем наказанисĕр ан юлччăр тесе эпир мĕнпур вăйпа тăрăшма хатĕр. Хальхи Европăра таварас шухăш вырăнлă пулсан та, эпир таварас шухăшпа кĕрешместпĕр. Эпир çакна ĕненсе кĕрешетпĕр: правосудие пĕтерсе лартма хăтланнă преступниксене хăйсен ĕçĕсемшĕн ответ тыттарсан çеç çынсен çыхăнăвĕнче цивилизациллĕ правосуди тивĕçлĕ вырăна ларма пултарать. Ответа хăвăрт тыттармалла».

«Вăрçă хыççăнхи тĕнчере пирĕн мĕн тума тивет?—тесе ыйтнă Иден.—Тĕнчере пирĕн цивилизацин тĕллевĕсемпе килĕшсе тăракан йĕркене, нумайлăха чăн-чăн мир туса хума пултаракан йĕркене мĕнле тумалла пулать-ха пирĕн? Çак ыйтусем çине памалли ответ—пĕрлешнĕ нацисем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлени пулать, конкретнăрах каласан—пĕрлешнĕ нацисене илсен—аслă державăсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлени пулать. Эпир политикăн мĕнпур ыйтăвĕсемпе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе килĕштерсе ĕçлеме тăрăшатпăр, эпир тата Англипе Совет Союзĕ хушшинчи договор тăрăх вăрçă хыççăнхи реконструкцире Совет Союзĕпе пĕрле килĕштерсе ĕçлеме пултăмăр. Паллах ĕнтĕ, çак схемăра Китай тăваттăмĕш партнер пулса тăрать».

## *Бразилире вăрçа хатĕрленеççĕ*

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Бразили правительстви çĕршыва хӳтĕлес тĕлĕшпе васкаса вăрçăллă мерăсем йышăнса пурнăça кĕртет. Халăха шалти оборона валли мобилизацилемелли çинчен тата промышленноçпа хуçалăх ресурсĕсене пурне те мобилизацилемелли çинчен калакан декретсем пичетлесе кăларнă. Хĕçпăшалсем туса кăларассине ӳстерсе пыма тата çарпа экономика тĕлĕшĕнчен кирлĕ мероприятисене пурнăça кĕртсе пыма ятарласа Çарпа экономика комитечĕ туса хунă. США-ран Бразилие экономикăллă делегаци тухса кайнă, делегацин çав комитета практикăра пулăшмалла пулать. Бразилин сывлăшрипе тинĕсри вăйĕсем Атлантика çыранĕ тăрăх пыракан коммуникацисене хӳтĕлес ĕçе хутшăнаççĕ. Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Бразилия вăрçа хутшăннă хыççăн противник Бразили çыранĕ патĕнче суднăсене путарасси пĕтсе ларнă.

Çак юлашки кунсенче Бразилири влаççем шпионажпа фашистла пропагандăн гитлерла агентсем организациленĕ çĕнĕ пысăк пункчĕсене аркатса тăкнă. Тытса хупнисем хушшинче темиçе нимĕç священникĕ пур, вĕсен чиркӳсенче радиопередачиксем пулнă. Вĕсенчен пĕрин питĕ вăйлă радиопередатчик пулнă, вăл тӳрех Берлинпа çыхăнса тăнă.

## Индири лару-тăру

ДЕЛИ, сентябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС) Тапнăра демонстраци пулса иртнĕ, çав май 80 çынна арестленĕ. Хулара студентсем хумханнă. Çавăн пекех Бомбейра та студентсен демонстрацийĕсем час-часах пула пуçланă. Ахмедабадра пухăннă халăх пĕр шкул çурчĕ çине Индин национальнăй конгресĕн флагне çакма тăнă, полици çав халăх çине пăшалпа пенĕ.

ЛОНДОН, сентябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС) Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Индири либералсен национальнăй федерацийĕ çакăн пек калакан резолюцие ырланă: правительство пурнăça кĕртсе пыракан репресиллĕ мерăсем Индири проблемăна татса парас ĕçсем патне илсе пыма пултараймаççĕ. Федераци Индире национальнăй правительство тума ыйтать. Çав правительство çĕршыв умĕнче, стратеги ыйтăвĕсемсĕр пуçне, пур ĕççемшĕн те ответлă пулмалла.

## Румынире шалти политикăллă лару-тăру çивĕчленни

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Антонеску шайкки вăрçа кĕртнĕ Румыни шалти лару-тăрăвĕ ытларах та ытларах çивĕчленсе пырать. Ун çинчен румынсен Радор агентстви пĕлтерсе тăракан хыпарсенчен те тавçăрса илме пулать. Çапла «Радор» çак кун пек хыпар пĕлтерет: правительство служащийĕсене тĕрĕслесе тăма ... «Кашни çынна, унăн ĕçĕсем çĕршыва сиен кӳрекен пулсан, халех айăпласа тытса хупмалла пулать». Агентство тата çапла калать: государство служащийĕсем мĕнле пурăннине асăрхаса тăма организациленĕ вăрттăн служба кашни служащи «мĕн туса çӳренине, государство тĕлĕшпе мĕнле шухăшланине» хытă сăнаса пыма, «йĕркесĕрлĕх пуçарса яма илĕртекенсене» йывăр айăпа кĕртме тивĕçлĕ. Вĕсене асаплантарса вĕлерме хушакан статья тăрăх суд тумалла.

Çак юнанисемпе чĕнӳсен сĕмсĕрлĕхне якатма тăрăшса агентство çапла калать: «правительство йышăннă мерăсем çине вĕсем Румынин шалти лару-тăрăвĕ начарланса пынине кăтартакан паллăсем çине пăхнă пек пăхмалла мар»,—тет. Анчах та фактсем тĕрĕссипе ĕçсем мĕнле тăнине кăтартса параççĕ. Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра Румыни çарĕсем питех те пысăк çухатусем тӳсни, нимĕçсем Румыние вĕçĕмсĕрех вăрă-хурахла çаратса тăни— ĕç вăйĕсем çитменнипе аптăракан Румыни çĕршывĕн экономикине аркатса ячĕç. Çапла пулин те, Гитлер Румыниран Хĕвелтухăç фронтне татах та çĕнĕ çарсем яма ыйтать, ку таранччен çар хатĕрĕсем тăвакан предприятисенче ĕçлеме хăварса пынă рабочисене те çара мобилизацилеме хушать. «Экономика тĕлĕшпе килĕшсе ĕçленипе» витĕнсе, Германия Румыниран продовольствипе чĕр тавар хырса тăрать. Фашистсен «Паризер цейтунг» ятлă хаçачĕ уççăнах çапла çырать: «Германипе Румыни хушшинче экономика тĕлĕшпе çĕнĕрен тунă килĕшӳсем экономика интересĕсен çĕнĕ пĕрлĕхне пĕлтереççĕ»,—тет. Фашистсен хаçачĕ çакна кăтартса парать: Румыниран Германие чĕр тавар тăратас плана темле пулсан та тултарса пымалла, «ку енчен финанс тĕлĕшпе тухса тăракан ыйтусем çине нимĕн те пăхмалла мар». Çапла ĕнтĕ фашистсен листокĕ румынсене çакна уççăнах систерсе хурать: Германия Румыниран хырса кайнă продовольствипе чĕр таваршăн мĕн чухлĕ те пулин тӳлĕ тесе Гитлерăн Румынири тарçисем пĕре те шутлама тивĕçлĕ мар.

## Англипе Америка пĕр-пĕрне изобретенисем парасси çинчен тунă килĕшӳ

ЛОНДОН, сентябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра Великобританипе Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительствисем вăрçă вăхăтĕнче пĕр-пĕрне изобретенисем парса тăрасси çинчен тунă килĕшĕве пичетлесе кăларнă. Кашни правительство хăйĕн граждăнĕсенчен хăйĕн укçипе тепĕр правительствăна кирлĕ информацисемпе патентсем илме пулать. Çав информацисемпе патентсем çинчен пĕлтермесĕр тăмалла пулсан, вĕсене вăрттăн сыхласа усрама кирлĕ мерăсем çинчен икĕ правительство пĕрле калаçса татăлаççĕ.

—o—

## *КĔСКЕН*

* Нимĕçсем Каммерфессора (Норвегия) пулăран консервăсем тăвакан пысăк завода тытса илнĕ, тата çавăн пек заводсенех вĕсем Тронхеймпа Кубра та тытса илнĕ. Çав заводсенче туса кăларакан продукцие нимĕçсем тинĕспе Германие ярса тăраççĕ.

* Гаванăри (Куба утравĕ) çар сучĕ нимĕçсен шпионне Лунинга асаплантарса вĕлермелли çинчен приговор йышăннă. Лунинг радио тăрăх тĕнĕл держависен подводнăй лодкисене суднăсем ăçта çӳрени çинчен пĕлтерсе тăнă.

**Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.**


ФИЛИАЛ ГОРЬКОВСКОГО ЭЛЕКТРОТЕХНИЧЕСКОГО ТЕХНИКУМА объявляет, что начало занятий на I и II курсах 1-го октября.
Занятия будут производиться в помещении школы № 4 (Ярославская 54.)

ОРГБЮРО ЦК СОЮЗА РАБОЧИХ ГОРОДСКИХ ПРЕДПРИЯТИЙ ПО ЧАССР переехало на улицу Плеханова, дом № 25. Телефон 4—95.
Корреспонденцию (расчетные ведомости по соцстраху за третий квартал 1942 года) направлять по вышеуказанному адресу.

ЧУВАШСКАЯ КОНТОРА СЕЛЬХОЗСНАБЖЕНИЯ доводит до сведения всех МТС, совхозов, колхозов, учреждений и организаций, что на складах „Сельхозснабжения“ с 28 сентября по 10 октября с/г. будет проводиться инвентаризация товаро-материальных ценностей и состояния расчетов.
Просьба ко всем, имеющим неоконченные расчеты с сельхозснабом, которыми на перечисленные деньги не выбраны из складов товары или оставлены таковые под сохранные расписки завскладов, за получением товаров обращаться до 10 октября, после 10-го числа претензии приниматься не будут.
Обращаться по адресу: г. Чебоксары. ул. Калинина, 34. Телеф. 0—94.
„СЕЛЬХОЗСНАБЖЕНИЕ“.

НАРКОМСОБЕС ЧАССР
доводит до сведения инвалидов, что выездная бригада протезной мастерской будет работать 1, 2 и 3 октября 1942 года в гор. Чебоксарах.
Бригада будет обслуживать инвалидов отечественной войны следующих районов: Козловский, Марпосадский, Чебоксарский, Ишлейский, Сундырский и Октябрьский.
Нуждающиеся в протезах инвалиды отечественной войны заблаговременно должны обращаться за нарядами в райсобесы по местожительству.
Лица, имеющие на руках наряды, из вышеуказанных районов должны явиться только в указанные сроки.
НАРКОМСОБЕС.

СОВХОЗ „РОСГЛАВВИНО“ (гор Чебоксары, ул. Коммунальная Слобода, 21) имеет в продаже посадочный материал разных сортов—яблонь, смородину, малину. Отпуск производится всем гражданам.
9—8 Дирекция.

ПРОПАЛИ ЖЕРЕБЕЦ пегой масти, 1941 года рождения, И КОБЫЛА рыжей масти, 1939 года рождения, на лбу звезда.
Знающих их местонахождение просьба сообщить по адресу: Советский р-н, п/о. Чурашево, Демикинскому колхозу «Броневик».

Горфинотдел доводит до сведения главных (старших) бухгалтеров учреждений, предприятий и организаций, что на основании сообщения НКФ СССР от 2.IX—42 г. за № 551, начиная с сентябрьской зарплаты, с граждан рождения 1923 года военный налог должен удерживаться в соответствии со ст. 8 Указа „О военном налоге“ с увеличением на 50 процентов.
Одновременно Горфинотдел напоминает о представлении к 10 октября отчетов фор. 47а об удержании налогов с рабочих и служащих (подоходного, культсбора, военного и бездетных) за третий квартал с/г.
Бланки отчетов получить в налоговом секторе горфинотдела.
ЧЕБОКСАРСКИЙ ГОРФИНОТДЕЛ.

Чебоксарскому пункту Заготзерно срочно требуется шофер для работы на грузовой машине.
Оплата по соглашению
Дирекция.

Чебоксарскому Торгу требуются бухгалтера и два счетовода-контролера.
Обращаться к гл. бухгалтеру Чебторга. Адрес: ул. Ленина, д. № 111. Тел. 2-26.


РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары. ул. Володарского, 5 Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 942 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6 58 24 п. н.